ХЫПАР
# ХРЕСЧЕН САССИ
ЮН КУН
16 (2428) №
Хакĕ ирĕклĕ
Эрнере икĕ хут тухать
2014, пуш, 5
1991 çулхи ака уйăхĕн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă

# Тăвайри тĕл пулусем

## ЧУНА УÇСА КАЛАÇСАН

Тăвайне килен-каян ырă улшăнусене тӳрех асăрхать. Иртнĕ çул кунта Республика кунне анлăн паллă турĕç. Нумай хутлă 20 çурта юсаса çĕнетнĕ, урам çулĕсене йĕркене кĕртнĕ. Тасалăхпа тирпейлĕхшĕн пурте тăрăшнă темелле. Раштав уйăхĕнче ача сачĕн никĕсне ячĕç.

– Виçĕ-çичĕ çулти ачасене садикпе тивĕçтерес ыйтăва татса панăпа пĕрех, – тет район администрацийĕн пуçлăхĕ Владимир Ванерке. – Халĕ халăха пухса тĕл пулусем ирттеретпĕр. Пурĕ 31 ял пирĕн, кашнине çитсе килесшĕн. Çынсемпе калаçнă чухне Раççейри, Украинăри лару-тăрăва сӳтсе яватпăр, хамăр ĕç-пуçа тишкеретпĕр. 2013 çулхи кăтартусем начар мар пирĕн. Ял хуçалăх кооперативĕсемпе фермер хуçалăхĕсем ĕне выльăх йышне сыхласа хăварчĕç. Кашни ĕне пуçне сĕт сăвăмне 4667 кг çитернĕ, юлашки çулсенчи чи курăмлă утăм ку. Грачевăн фермер хуçалăхĕ тата "Акконд-агро" юлташлăх 6 пине кармашаççĕ. "Дружба", "Чутеевский" кооперативсем аш-какай ытларах туса илчĕç. Кашни çул икĕ çĕнĕ ферма хута каять. Çав вăхăтрах уйрăм çын тытакан выльăх шучĕ чакни хумхантарать пире. Ĕне сĕтне унччен 21 тенкĕпе йышăнатчĕç, халĕ 18-па пуçтараççĕ. Тĕл пулура нумай çивĕч ыйтăва çĕклеççĕ. Сăмахран, Мучар шкулне тума пуçăнасшăн. Пуш уйăхĕнче ун проекчĕ хатĕр пулмалла. Канашран пырса кĕнĕ çĕрте кĕпер пур, çĕннине тумалла: унăн сваййĕсем йывăçран, çул иртнĕçем анса пыраççĕ. Хăрушсăрлăх ыйтăвĕ мала туха тăчĕ.

Пилĕк ял тăрăхне комплекслă аталантармалли проектсене хатĕрленĕ, пĕлтĕр икĕ шкула тĕпрен юсани çинчен те хавхаланса каласа пачĕ Владимир Алексеевич. Куллен татса памалли ыйту темĕн чухлех. Калăпăр, Пуянкассисен урамсене çутăпа тивĕçтерессипе кăмăлсăр, районти пурĕ тăхăр урамри çутă тытăмне пăхса тăракан организацие килĕшсе татăлайман тата ыт. те. Кармал халăхĕ ĕçмелли шыв ыйтăвне пĕрре мар çĕклет. Кунтан Канаш валли


Владимир Ванерке

шыв уçлаççĕ, вырăнти çынсем вара çак ырлăхпа туллин усă кураймаççĕ.

– Мана çак должноçа çирĕплетни шăп та лăп пĕр çул, – каласа парать АПК аталану управленийĕн ертӳçи Валерий Чайкин. – Ӳсĕмлĕ ĕçлекенсене май пур таран хавхалантарма тăрăшатпăр. Тĕслĕхрен, фермăсен ĕçне-хĕлне кашни уйăхра пĕтĕмлетессине йăлана кĕртрĕмĕр. Мала тухнисене дипломсемпе хаклă парнесем паратпăр. Совет саманинчи кивĕ мелсемпе усă курма кирлех-ши тесе каласса туятăп. Унччен мĕн лайăххи пулнă – вăл кивелмен! Пĕлетĕр-и, выльăх пăхакансемпе ĕне сăвакансен пĕр ушкăнне Тăвайри краеведени музейне илсе килсе кăтартнăччĕ. Епле савăнчĕç, ытти чухне кунта кĕрсе курма вăхăт çукрах вĕсен. Тепĕр çĕнĕлĕх вăл – ырми-канми тăрăшакансене ятарлă медальпе чыслани. Хисепе тивĕçлисемшĕн ĕмĕр асра юлмалли самантсене район хаçатĕнче кăларатпăр. Хăйĕн сăнне курсан камăн чунĕ хĕпĕртемĕ.

Ялти тĕл пулусене администраци çыннисемпе пĕрле сывлăх тата культура ĕçченĕсем те хаваспах хутшăнаççĕ. Шел, тухтăрсен сăмахне пур чухне те ăша хывмастпăр çав. Эрех-сăра серепинчен епле хăтăлăпăр-ши? Уйрăмах хĕрарăм ĕçкĕ ăшне путни шухăшлаттарать.

Кусса çӳрекен лабораторисем килни ял халăхĕшĕн питĕ меллĕ. Унччен сывлăха тĕрĕслеттерессинчен тĕрлĕ сăлтав тупса пăрăннисем те сиплевçĕсен канашне тăнлаççĕ. Паллах, клубра юрă-кĕвĕ ытамне лексен кăмăл пушшех çĕкленӳллĕ.

## ГРАЧЕВ ХУÇАЛĂХĔ

Ун хушаматне темиçе те илтме тӳр килчĕ. Вулакансене хастар чăвашпа çывăхрах паллаштарар пуль. Кирек епле каласан та ялта харпăр хăй тĕллĕн ĕç пуçарма çав тери йывăр-çке. Чи малтанах çавăн пирки ыйса пĕлес терĕм Валерий Геннадьевичран.

– Эпĕ нумай ачаллă çемьере ӳснĕ, ачаранпах кĕтӳ кĕтнĕ, çум çумланă. Тăван çĕр сĕткенĕ вăй-хал панă-тăр. Канашри медицина училищинче ветеринара вĕренсе тухнăччĕ. Хулара хваттер те пулнă. Пиччене илтерĕм. Унтанпа сакăр çул сисĕнми иртрĕ. Пĕрремĕш утăмсем çăмăл килмен. Паянхи пекех ас тăватăп: авăн уйăхĕччĕ, арканнă "Слава" хуçалăх паркĕнче сутма ĕлкĕреймен темиçе тракторпа комбайн ларатчĕ, выльăх-чĕрлĕхне такама тыттарса янă... Акă пĕтĕм пурлăх! Тепри ман вырăнта çак йĕркесĕрлĕхе кура алă сулать. Тытăнса пăхас терĕм.

Чăваш "куç хăрать те ал тăвать" тесе каланине асра тытнă. Халь кулăшла туйăнать: юхăннă фермăра пĕр сысна аçи юлнăччĕ, пы-ысăк чух-чух. Çапах эпир сысна самăртас çулпа каймарăмăр. Паян ялта ĕне усрани усăллăрах. Вара çулталăка яхăн витене юсаса çĕнетме тиврĕ, ытти хуралтăсене йĕркене кĕртрĕмĕр. Çапла аталанма пуçларĕ фермер хуçалăхĕ. Каçарăр, тепĕр лаша пурччĕ.

**– Ĕçлесе курнисем çапла ăс параççĕ: çĕнĕ ĕçе пуçăнсан хăв умна капашсăр тĕллевсем лартмалла мар, мĕн тума пултарнипе çырлахмалла.**

– Майĕпен ĕçлесе пымалла ĕнтĕ, кайран çул уçăлать. Хăй вăхăтĕнче сысна шутне икĕ пине çитернĕччĕ вĕт! Çурисене Муркаш районĕнчи "Свобода" хуçалăхра туяннăччĕ.

2-мĕш стр. ➔

ШУХĂШ

## Намăс-симĕсе çухатас марччĕ

Вăтăр çула яхăн иртрĕ унтанпа. Культура ĕçченĕсен йышне кĕрекенсем «уйăх укçи пĕр мăшăр ата туянма та çитмест» тесе йĕрмĕшме тытăнсан пире ялан пĕр пек лăплантаратчĕç – малтан базис тумалла-ха, вара тин надстройкине хăпартăпăр тетчĕç. Базиспа надстройкăна философи кĕнекисем те уйрăмшарăн ăнлантарманнине шута илместчĕç. Малтан базисне тумалла тени пирвай мул хуçисене, чиновниксене пуйтармалла-ха тени пулнă иккен. Паян ăна чиновниксем хăйсем те пытармаççĕ. Раççей правительствин председателĕн пĕрремĕш çумĕ И. Шувалов мĕн каланине кăна илер-ха: «Общество коррупци ан пултăр тесе тăрăшать пулсассăн, патшалăха чăн-чăн профессионалсем тытса пычăр тесен, вĕсене пысăк ĕç укçи тӳлемелле». Татах çитмест чиновника. Чи пысăк ĕç укçипе чи пĕчĕк ĕç укçи хушшинчи уйрăмлăх вара вун-вун хут та иртсе кайнă.

Тем валли те пур патшалăх укçи. Культура валли кăна çук. Культура çулталăкĕ тетпĕр, анчах культура валли федераци бюджечĕн – 0,7 процентне, субъект бюджечĕн 3 процентне кăна уйăрнă. Миллионĕ-миллионĕпе, тепĕр чухне миллиарчĕпе те вăрлаттарма, патшалăх корпорацийĕсен пуçĕнче тăракансене вун-вун миллион доллар тӳлеме вара патшалăхăн укçи тупăнать. Чăваш патшалăх кĕнеке издательстви укçа çуккипе, федерацин вăтам кăтартăвĕпе танлаштарсан, чылай сахалрах кĕнеке кăларать. Автор прави çинчен йышăннă саккуна пăсса 12 çул ытла чăваш журналĕсем гонорар тӳлемерĕç. Патшалăх издательстви те тӳленин ятне кăна тукаларĕ. Халĕ те пулин çав йăлана пăсасшăн мар.

Ленинград блокадине татнăранпа 70 çул çитрĕ. Ун чухне çынсем тӳссе ирттернĕ хĕн-нуша çинчен паян та чуна çӳçентереймесĕр итлейместĕн. Кунне пĕр татăк çăкăрпа чунне усрайнă çынсем ун чухне те чун тулăхĕ çинчен манман. Д. Шестакович музыка симфонийĕ, О. Берггольц çулăмлă сăвăсем çырнă. Паянхи историксем пурте пĕр шухăшлă – Çĕнтерӳ тума совет çыннисене юрă пулăшнă. Ун чухне те театрсем хупăнман, ансамбльсем концерт хыççăн концерт кăтартнă. Чăваш литератури те вăл тапхăрта çĕнтерӳ çулне такăрлатсах тăнă. Писателе те ун чухне тивĕçлĕн тата вăхăтра тӳленĕ. Выçăллă-тутăллă пурăнсан та çынлăх пĕтмен, намăс-симĕс çухалман. Çынри усаллăха кăмăл-сипет, мораль, культура, искусство, литература, халăх йĕркипе тĕн ĕненĕвĕ чарса тăраççĕ. Анчах вĕсем çынра ăнсăртран çуралмаççĕ. Эпир пурте илемлĕ литература витĕмĕпе ӳссе çын пулатпăр. Истори вара пиртен чăн-чăн гражданин тăвать.

2-мĕш стр. ➔

КĔСКЕН

### Çавра çулпа мар – тӳртен

Канаш районĕнчи Мăкăр ялĕнче пурăнакансем Чапаев урамĕнчен Çырма тăкăрлăкне хальччен çавра çулпа çӳренĕ. Икĕ урама çыхăнтаракан çĕнĕ кĕпере тинех туса пĕтернĕ. Халĕ Чапаев урамĕнчисем лавккана, шкула, ача садне ун урлă тӳртен каçаççĕ. Çĕнĕ кĕпершĕн ялти пуçарулла та хастар ĕçченсене пурте тав тăваççĕ.

### Юрпа çумăр та, çил те хăратмĕ

Улатăрта пĕр водитель машинипе автобуссем чарăнмалли павильона тĕксе янăранпа виçĕ çул çитет. Çак тапхăрта район çыннисем автобуссене юрпа çумăр, çил айĕнче кĕтсе нумай нушаланнă. Çĕнĕ павильон тума пуçлăхсене те пĕрре мар ыйтнă, çăхавсем те çырнă, ыйтăва пĕрлĕхлĕ информаци кунĕсенче те хускатнă. Чăваш Республикин Транспорт министерстви май килсен павильона 2014 çулта тума шантарнă.

Нумаях пулмасть Улатăрсем патне "Чăвашупрдор" организацийĕн кĕтнĕ хыпар çитнĕ. Автопавильон тăвассине кăçалхи программăна кĕртнĕ.

### Çӳреме меллĕ

Етĕрне районĕнчи Анат Пăрнаш ял старости Петр Данилов халăхшăн тăрăшакан çынах çав. Иртнĕ çул вăл çине тăнипе Сад урамĕнчи çула йĕркене кĕртнĕ. Пĕр сухрăм тăсăлакан урампа халĕ иртсе çӳреме меллĕ.

Урпашра Сергей Князев пуçарăвĕпе ял хушшинчи çулăн пĕр пайне типтерленĕ. Çак ялти тепĕр урама юсама вара вырăнти ял тăрăхĕ пулăшнă. Автомашинăсем çӳрекен 249 метрлă çула вак чулпа хăйăр хурса хытарнă.

Ялти çулсене йĕркене кĕртме вырăнти администрацин пур чухне те укçа çитмест. Анчах юлашки вăхăтра ку тĕлĕшпе республика та пулăшать, ял тăрăхĕ уйăракан укçа çумне хăйĕн бюджетĕнчен хушать. Кăçал Урпаш ял тăрăхĕнче Çатрари Мир урамне юсама палăртнă.

### Кăçал та юсĕç, çĕнетĕç

"Район больницине халĕ кĕрсе тухма кăмăллă", – теççĕ Хĕрлĕ Чутайсем. Пĕлтĕр ăна тăрăшсах юсанă. Поликлиника çуртне тĕпрен çĕнетнĕ. Туканаш ялĕнче модульлĕ фельдшер тата акушер пунктне хута янă, унта кирлĕ хатĕр-хĕтĕр вырнаçтарнă.

Кăçал юсав ĕçне малалла тăсаççĕ. Инфекци уйрăмне çĕнетсе хаклă йышши медицина хатĕрĕпе пуянлатмалла, Анат Çĕрпӳкассинче, Çĕн Атиккассинче, Хурашашра çĕнĕ фельдшер пункчĕсем уçăлмалла. Больницăна çамрăк специалистсене явăçтармалла, ку тĕлĕшпе вĕсене пурăнмалли вырăнпа тивĕçтермелле... Кĕскен каласан, ĕç нумай.

Ирина ПАВЛОВА.

## ÇАНТАЛĂК

| Шупашкарта | Вăхăт | 5.03 | 6.03 |
| --- | --- | --- | --- |
| Температура, °С | 2–4 сехетре | –9 | –8 |
| | 14–16 сехетре | –3 | 0 |
| Юр çăвать | | – | – |
| Атмосфера пусăмĕ, мм | | 758 | 763 |

# Культурăсăр чун хавшак

**Красноармейски районĕнче тăхăр культура çурчĕ. Тĕрĕсси-пе, вĕсен ячĕ халĕ урăхларах – информаципе культура аталанăвĕн центрĕ. Кашни çулах районта пилĕк пинрен кая мар мероприяти ирттерεççĕ. Кăçал Культура çулталăкĕ пулнă май вĕсен шутне тата ӳстересшĕн.**

Район администрацийĕн культурăпа социаллă аталану пайĕн ертӳçи Рена Осипова каланă тăрăх – тăхăр центр та йĕркеллĕ ĕçлет. Вĕсенчен пиллĕкĕшне тĕпĕ-йĕрĕпе юсанă, виççĕшĕ вара тĕслĕх центр шутланаççĕ.

Чи лайăх культура çуртне, ĕçчене патшалăх грант парса хавхалантарать. Пĕлтĕр асăннă тăрăхран çак хисепе Кĕçĕн Шетмĕ ял тăрăхĕн культура çурчĕ тата унăн директорĕ Валентина Петрова тивĕçнĕ. Сăмах май, республикипе 37 грант уйăрнă, вĕсенчен иккĕшне Красноармейски районĕ илнĕ. Çак конкурса кăçал та хутшăнасшăн. «Пултаруллă çынсем те, тăрăшса ĕçлекен учрежденисем те пур. Çавăнпа вĕсен ĕçне те кăтартма пĕлмелле», – тет Рена Михайловна.

Специалистсем çитменни çеç пăшăрхантарать ăна. «Ятарлă пĕлӳ илнисем çителĕксĕр, – малалла тăсăлать сăмах. – Пĕтĕм ĕç специалист йĕркеленинчен килетçке. Аккомпаниатор районĕпе те тăваттă çеç. Ташă лартакан та çук. Пирĕн тăрăхра газ уçлакансен Заволжски клубĕнче çеç специалист-сем çителĕклĕ». Хăть мĕн каласан та ку çитменлĕх ĕç укçипе çыхăннă.

Район темиçе çул Мари Республикинчи Морки районĕпе тата Тюмень облаçĕнчи Тавда районĕнчи чăвашсен «Тăван» ассоциацийĕпе çыхăну тытать. Пĕр-пĕрин патне кайса çӳреççĕ, концерт кăтартаççĕ. Сăмахран, марисем пĕлтĕр Филипп Лукин ячĕпе ирттернĕ конкурса хутшăннă, унăн юррисене чăвашла шăрантарнă. Морки районĕнче халăх академи хорĕ пур. Конкурсра шăпах вĕсем хăйсен пултарулăхĕпе куракана тĕлĕнтернĕ. Çакна та асăнса хăварма кăмăллă: Ф. Лукин произведенийĕсене шкул программине кĕртме, вĕренекенсен хорне аталантарма сĕнӳ тăратнă конкурсра. Композитора халаллнă çулталăка «Ансамбльсемпе хорсен кĕрешĕвĕ» мероприятипе вĕçленĕ. 13 шкулти тата 9 ял тăрăхĕн хор коллективĕсем тупăшнă унта. Тĕп хуларан ятарласа килнĕ жюри асăннă тăрăхра хор ушкăнĕ вăйланса пынине палăртнă. Пултаруллă ентешĕн ятне çӳлте тытаççĕ Красноармейскисем.

Иртнĕ кĕркунне вĕсем Çĕпĕрти чăвашсем патне çул тытнă, йăхташăмăрсене тăван юрăкĕвĕпе савăнтарнă. Çĕпĕрти чăваш ялĕсене çитсе курнă.

Юрă-ташă уявĕсĕр пуçне районта сăвăçсен конкурсне те йĕркелеççĕ. Унта аслă ăру та, çамрăксем те хутшăнаççĕ. Ăна кăçал та ирттерме палăртнă.

Район халăхĕшĕн пĕлтĕрхи Акатуй асра юлнă. Ăна халăх уявĕсемпе, йăли-йĕркипе çыхăнтарнă. Пĕрисем тырă акнине сăнланă, теприсем – утă çулнине, виççĕмĕшĕсем туй йăли-йĕркине, тăваттăмĕшĕсем – кĕр сăрине... Тăван культурăна упрани, юрра-ташша манăçа кăларманни çав тери паха.

Малашне те тăрăшса ĕçлеме шантарчĕ Рена Михайловна. «Культура» сăмах çав тери анлă. Вăл сцена çинче юрă-ташă кăтартни çеç мар, урам тирпейлĕхĕ те, сыпăçуллă пурăнасси те, халăхăн ăс-хакăл пуянлăхĕ те, тирпейлĕ тумтир те, – терĕ 25 çул директорта ĕçленĕ хĕрарăм. – Çавăнпа та ăна пурин те кар тăрса аталантармалла. Пĕри вăй хунă вăхăтра теприн те ĕçе кӳлĕнмелле. Пĕр-пĕрне ăнланса, алă парса вăй хумалла».

Ăслă сăмах çумне мĕн хушăн? Ентешсене ăнăçу, пархатар, çирĕп вăй-хал сунмалли çеç юлать.

**Валентина ПЕТРОВА.**

# Тăвайри тĕл пулусем

← 1-мĕш стр.

Каярахпа республикăри ăратлăхпа ӳсĕмлĕ ĕçлекен хуçалăхсенчен пăрусем илсе килтĕмĕр. Маларах каларăм, эпĕ выльăх тухтăрĕ мар, çынсене сыватнă. Зоотехник наукине лайăх чухлакан специалистсемсĕр ниепле те май килмест.

**– Районăн тĕп зоотехникĕ Елена Михайлова каланă тăрăх – сĕт сăвассипе эсир мала ӳкнĕ, ку çитĕнӳре ертӳçĕ тӳпи пурах-тăр.**

– Ӳсĕм çăл куçĕ – выльăх пăхакансемпе ĕне сăвакансен тăрăшулăхĕпе пултарулăхĕнче. Людмила Шуйкова – 6454, Марина Никитина – 6406, Наталья Ефремова – 6475, Надежда Димитриева 6494 литр сĕт суса илчĕç. Вĕсен ӳркенменлĕхĕнчен чăннипех тĕлĕнетĕн. Кашнийĕнех çемье, ача-пăча...Мăшăрĕсем Мускава ĕçлеме çӳреççĕ.

Фермăра çĕнĕ техника вырнаçтаратпăр пулин те ĕçĕ çăмăл мар. Паллах, халь ĕлĕкхилле хĕвелпе тан тăрса выльăх патне кăштăртатас самана хыçа юлчĕ. Вĕсем çитнĕ тĕле выльăхсене апатлантарнă, комбикорм панă. Сăмах май, комбикорм авăртакан цеха хута ятăмăр. Хĕвел çаврăнăш каяшне тата крахмала сутăн илетпĕр. Апат рационне çĕнетессинче хăйне евĕрлĕх чылай.

Тĕш тырра хамăр акса туни апат хăй хаклăхне чакарма пулăшать. Пĕтĕмĕшле илсен акса тăвакан çĕр лаптăкĕ 905 гектарччĕ, кӳршĕ хуçалăх 60 гектар сутрĕ. Ĕне выльăх çӳретмелли 250 гектар çаран пур. Кунсăр пуçне люцерна акса çитĕнтеретпĕр.


Валерий Грачев

**– Хĕл кунĕсенче сĕтĕн сутăн илмелли хакĕ пысăккипе хресченсем кăмăллăччĕ.**

– Çапла, анчах хак пĕр шайра тăмастьçке. Пирĕн вара банк кредичĕсемпе татăлас шухăш пуçран каймасть. Сĕтпе ашкакай сутăнсан пурнăçа йӳнеçтерекелетĕн. Налуксене вăхăтра тӳлемелле, çынсене – ĕç укçи.

**– Калаçура çак ыйтăва хускатни питĕ вырăнлă. Мĕнлерех шухăш-кăмăлпа пурăнать ял çынни? Мĕн канăç памасть ăна?**

– Мĕн пытармалли, ĕç укçи кама тивĕçтерет-ши? Ĕç тухăçлăхне тата продукци калăпăшне ӳстерсен ăна пысăклатма май килĕ. Шалусăр пуçне ялта пурăнакансене чун апачĕ те кирлĕ-çке. Йышпа театра е концерта каяссине йăлана кĕртрĕмĕр. Хĕрарăмсем питĕ пуçарулла, çав спектакле кайса курсан аванччĕ, тесе ыйтаççĕ те епле хирĕçлĕн. Пултарулăх ушкăнĕсене хамăр чĕнсе илетпĕр, Шупашкара çитсе килес тĕк – пирĕнтен чару çук.

Çӳлерех хамăр пултарнă таран ĕçлесе пымаллине палăртрăмăр. Тĕптĕрĕс. Эпир 200 ĕне усратпăр, сăвăм начар мар. Технологие лайăх пăхăнса ĕçлесен чăрмавсем сиксе тухмĕç. Пĕр ĕнене кунне 6-7 кг комбикорм, 4 кг хĕвел çаврăнăш каяшĕ тивĕçет. Çуллен сенаж çителĕклĕ хатĕрленĕ.

Ĕне ферминче пуян опыт пухнă Валентина Шашковăпа Алина Юзукова ырă сăмаха тивĕçлĕ. Николай Богачев, Николай Шашков механизаторсем маттур. Комбикорм производствине Олег Шашков агроном йĕркелесе пырать. Вĕсене шанатăн. Çавнашкал хастарсем çинче тытăнса тăрать пирĕн хуçалăх.

**– Пĕчĕк мăйăрăн тĕшши тутă теççĕ, ăнăçу сунатпăр сире!**

– Хăвăра тав.

**Вячеслав ГРИГОРЬЕВ.**

## ШĂМАТ КУНХИ «ХЫПАРА» ЙӲНĔ ХАКПА ÇЫРĂНĂР!

Куллен тухакан «Хыпара» 2014 çулăн пĕрремĕш çурри валли çырăнма (460 тенкĕ те 86 пус) укçа-тенкĕ çитмесех пулсан сире эпир

**«Хыпар – шăмат куна» суйласа илме сĕнетпĕр. Вăл чылай йӳнĕрех – 218 тенкĕ те 22 пус çеç.**

16 страницăпа, тĕрлĕ тĕспе пичетленекен кăларăмра сире кирли пĕтĕмпех пур: çĕнĕ хыпарсем, тĕплĕ тишкерӳсем, публицист шухăшĕсем, историе кĕрсе юлнă çынсемпе пулăмсем, паянхипе иртнĕ пурнăç, ятарлă страницăсем, Мускаври хаçатсем мĕн çырнисем, хуçалăхра кирлĕ сĕнӳ-канаш, гороскоп, эрнелĕх теле-радио программăсем тата ытти те, тата ытти те.

Асра тытăр: «Хыпар» хаçатпа кам туслă, ăна вуласах тăрать – вăл пурнăçра та хăватлă, мал курăмлă.

## «Çамрăксен хаçачĕ» – Интернетра

Хисеплĕ вулакансем! Пуш уйăхĕнчен тытăнса «Хыпар» Издательство çурчĕн сайтĕнче «Çамрăксен хаçачĕн» номерĕсене уççăнах вулама май пулмĕ. Туллин паллашас тесен унăн электрон версине çырăнса илмелле. Пуш – çĕртме уйăхĕсенче **«Çамрăксен хаçачĕн» электрон вариантне электрон почтăпа илсе тăмалли хак – 50 тенкĕ.** Кăларăма тĕрлĕ мелпе çырăнма пулать. Кун пирки тĕплĕнрех hypar.ru сайтра пĕлме май пур.

Аса илтеретпĕр: «Çамрăксен хаçатне» 2014 çулăн II çуррине илсе тăмашкăн «Раççей




почтин» мĕн пур уйрăмĕнче 272,22 тенкĕпе çырăнтараççĕ. «Чăваш пичечĕ» тата «Советская Чувашия» киоскĕсенче йӳнĕрех: 231 тенкĕ. Редакцире 144 тенкĕпе çырăнма пултаратăр.

# Намăс-симĕсе çухатас марччĕ

← 1-мĕш стр.

Раççей те пасар саккунĕсемпе пурăнма тытăнсан Америкăри Гарвард университетне пĕтернисем пире çине тăрсах моральпе намăс-симĕслĕх çинчен вĕрентни суя вĕрентӳ теме тытăнчĕç. Вĕсемех пасар саккунĕсем кăна çынпа çын хушшинчи çыхăнусене йĕркелеме, çынна çын пулма пулăшĕç терĕç. Анчах пасарăн пĕр саккун кăна. Унăн пурне те, пурне те сутмалла. Вăл шутра культурăна та. Анчах культура сутăнасшăн мар. Вăл ним туса та пасар саккунĕпе пурăнасшăн мар. Çын хăй те тавар шутне кĕрсе пымасть-и-ха? Халĕ спортсменсене уççăнах хаклашса сутаççĕ. Патшалăх Думи «Дима Яковлев саккунне» йышăнман пулсан паян та тăлăх ачасене Америкăна сутса пурăнмаллаччĕ-ха. Юхха хĕрарăмсен хутне кĕрекен тупăнмарĕ те, вĕсене çаплах чикĕ леш енне юрату сутса пурăнма ăсатаççĕ.

«Неореформаторсен» шухăшĕпе культура та çакнашкал тавар кăна пулмаллаччĕ. Çавăнпа вĕсем чикĕ леш енчен шоу-бизнес текеннине васкаса кӳрсе килчĕç. Анчах ăна никамах та культура тесе йышăнасшăн мар. В. Путин президент çумĕнчи культурăпа искусство канашĕн пĕр ларăвĕнче каланине ас туса юлтăм: «Культурăна йăпанчăк вырăнне кăна хурас йăлана тӳрех пĕтерме пулмĕ, анчах çакна пĕтермеллех. Культура политики те çакна тума пулăшмалла. Культурăна тивĕçлĕ шая çĕклеме тăрăшмалла». Анчах шоу-бизнес паян сцена тата экран хуçи пулса тăрать.

Пасар пурнăçĕмăрăн мĕн пур енне укçапа кăна хаклать. Раççей телеканалĕпе «Индустрия кино» кăларăм тухса тăрать. Унти мĕн пур калаçу хăш фильм мĕн чухлĕ укçа пуçтарни çинчен кăна. Урмăш-сурмăш фильмсем рейтинг тăваççĕ. «Гарри Поттера» мĕнле рекламăланине хальхи пекех ас тăватăп. Кирек ăçта пăрăнсан та хăлхана çав реклама пырса кĕретчĕ-кĕретчех. «Евгений Онегин» сăвăлла романа никам та рекламăламан. Вăл пĕрремĕш хут мĕн пурĕ те 150 экземплярпа пичетленнĕ. Анчах пирĕн пурнăçа тĕппипех кĕрсе юлчĕ.

Патшалăх культурăран айккинерех пăрăнма хăтланни этемлĕх саккунне пăснипех тесе шухăшлатăп. Наци культури, искусстви, литератури пасар саккунĕпе пурăнаймĕ. Çакна пĕле тăркач патшалăх хăех йышăнакан саккунсене пăсса ялти клубсене, шкулсене хупнине, библиотекăсене кĕнекесĕр хăварнине, писательсене ĕçшĕн тӳлеменнине халăх чунне пушатса хăварни тесе кăна хакламалла.

Çамрăксене «пепси» ĕçме хăнăхтарса çитернипе кăна çырлахмарăмăр-çке. Вĕсенех мĕнле пулсан та укçа çапма вĕрентсех тăратпăр. Çав вăхăтрах мул хуçисем иртĕхнине, коррупци алхаснине хирĕç кĕрешенçи кăна тăватпăр.

Раççейре пурăнакансен 59 процентĕ ачамăрсем чухăн пулсан та таса чунлă çитĕнччĕр тесе тăрăшать. Мул мар, чун тулăхĕ кирлĕ вĕсене. Чун тулăхĕ вăл – культура, искусство, литература.

**Денис ГОРДЕЕВ,**
**Чăваш халăх писателĕ.**

**Ял хĕрарăмĕ**

# Çуратнăшăн, юратнăшăн...

Хĕрарăм – асанне-кукамай, анне, аппа та йăмăк, мăшăр, савни... Вăл пуртан тĕнче илемлĕ, кил-çурт ăшă та тирпейлĕ. Паян хĕрарăм арçынпа тан вăй хурать, ачисене те çитĕнтерет. Шел, вырăнта ĕç пулманран унăн ют тăрăха кайма та тивет. Паллах, кун пек чухне кил-çурт та «сивĕнет», ача-пăча та шухă ÿсет. Авалтанах хĕрарăма «кил-çурт управçи» тенĕ-çке. Анчах самана ăна та авать, хуçать, пĕр шелсĕр таптать. Ахальтен мар ĕнтĕ укça ĕçлесе илес тĕллевпе вăл Мускав çулне такăрлатать. Тепри вара картиш тулли выльăх-чĕрлĕх тытать, пахча çимĕç çитĕнтерет. Çуллахи вăхăтра пÿрте кĕме те вăхăт çук унăн, кунĕпех пахчара тĕрмешет. Телекурав умĕнче ларнă чухне те ахаль лармасть хĕрарăм. Алса-чăлха çыхать е тĕрĕ тĕрлет. Унăн алли ĕç патнех туртăнать.

Вăрмар районĕнчи Чупай ялĕнче пурăнакан Валентина Григорьевăпа паллаштарасшăн вулакана. Ял çынни хакланă тăрăх – пĕр минут та пушă лармасть вăл: хушма хуçалăхне йĕркелесе пырать, сусăр упăшкине пăхать, кил-çуртне тирпейлет, пахча-çимĕç, аш-пăш сутма Хусана çÿрет... «Пурне те пурнăçлама мĕнле ĕлкĕрет-ши?» – тĕлĕнеççĕ Чупайсем.

Маларах Григорьевсем Шупашкарта пурăннă. Ашшĕ-амăш çуртне пăрахăçа кăларас темен вĕсем, хуларан яла куçнă. Картиш тулли выльăх-чĕрлĕх ĕрчетме тытăннă. Сысна, каярахпа «Орловски» тата «Романовски» ăратлă сурăх усрама пуçланă. Пĕр вăхăт 120 пуça çитернĕ. Шел, Анатолий Иванович сусăрланнă хыççăн хуçалăх ĕçĕ пĕтĕмпех Валентина Петровна çине тиеннĕ. Паллах, сурăх шутне чакарнă пулсан та ун валли ĕç çителĕклĕ. Çуллахи вăхăтра пахча çимĕç çитĕнтерет маттур хĕрарăм. Пĕр сăмахпа каласан, çывăрма та вăхăт çук унăн. Кунĕпе çĕр тĕрлĕ ĕç пурнăçлать вăл.

Валентина Григорьева пек вашават чунлă хĕрарăм республикăра чылай. Кашни ялтах, кашни урамрах пур вĕсем. Ватăлсан та ĕçрен уйрăласшăн мар. Акă Йĕпреç районĕнчи Эйпеçри Таисия Нягакова ватлăха пăхмасăрах кавир тĕрлет. Çакна тума ăна никам та хистемест. Чунĕ ыйтать.

Паллах, ман шухăшпа килĕшмен çын та пулĕ. Хĕрарăма хурлакан та пур. Чăн та, самана пире те чылай улăштарчĕ. Лайăх енне çеç мар, япăх тĕлĕшпе те. Çапах та, «ыр çын нумай тĕнчере» тенешкел, пурнăçшăн çунакан хĕрарăм çав-çавах чылай. Ачи-пăчине тĕрĕс-тĕкел çитĕнтерессишĕн чунне пама хатĕр вĕсем. «Тискерленсе пырать тĕнче. Ăна çăлаканни – хĕрарăм», – тенĕ Геннадий Волков ăсчах. Этемлĕхĕн черчен çурри те çав-çавах çемье пусмăрне тÿсет. Мĕншĕн? Ачипăчине тăлăх ÿстерес мар, кил-çуртсăр çапкаланса çÿрес мар тесе. Йывăр пулсан та чăтать. Тĕпренчĕкĕ курасран вăрттăн макăрать. Телей кашни çын умĕнчех йăл çиçмест çав.

Пĕтĕм тĕнчери Хĕрарăмсен кунĕ çывхарса килнĕ май асанне-кукамая, аннесене, тус-тантăша, аппасемпе йăмăксене, савнисене саламлама манар мар. Ăшă сăмах та чуна ăшăтать. Аннесене вара уйрăммăн саламласа тав тăвар. Çуратнăшăн, юратнăшăн, чĕкеç чĕлхи пилленĕшĕн... Сывă чух хисеплесчĕ, хакласчĕ вĕсене.

# Çемье савăнăçĕ

**Нумай ачаллă çемьесене патшалăх çурт-йĕрпе тивĕçтерессi йăлана кĕчĕ. Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Лапри Чăрăшкасси ялĕнчи Журавлевсем те çак телее туйрĕç. Кăçалхи Çĕнĕ çул умĕн вĕсем çĕнĕ вырăна пурăнма куçрĕç.**

## Юмахри кермен

Наталья Вениаминовна пилĕк тĕпренчĕкне пĕччен çитĕнтерет. Юрать тăванĕсем пулăшаççĕ ăна. Хальччен вĕсем Шуршăлта ашшĕн хваттерĕнче йăмăкĕн çемйипе пĕрле пурăннă. 2008 çулта хĕрарăм хваттер черетне тăма ял тăрăхне ыйту тăратнă. Кĕтнĕ кун вара пĕлтĕрхи кĕркунне çитнĕ. «Чÿк уйăхĕн 4-мĕшĕнче куçса килтĕмĕр. Япаласене куçарма тăвансем пулăшрĕç. Хальлĕхе вĕсене çĕнĕ пÿртре пухаймарăмха. Çулла пуçтарăнас кăмăл пур. Çĕнĕ çула килтех ирттертĕмĕр», – кăмăллăн калаçать кил хуçи хĕрарăмĕ.

Журавлевсем паян икĕ хутлă пысăк çуртра кун кунлаççĕ. Икĕ çемье валли тунăскер вăл. Пĕр енчен – пĕрисем, тепĕр енчен теприсем кĕреççĕ. 139,9 тăваткал метрлă çуртра пурин валли те кĕтес пур. Кунтах – ванна, туалет. Шыв кĕрет-тухать, пÿрт газпа хутăнать. Шуршăлта хваттер, çĕнĕ çурт валли çĕр лаптăкĕ пулманран 2012 çулхи çуркунне Журавлевсене çак çурта сĕннĕ. «Пирвайхи хут кунта ачасемпе килтĕмĕр. Пурне те килĕшрĕ. Пÿлĕмсем пысăк, ачасем валли вырăн чылай, – малалла сÿтĕлет сăмах çăмхи. – Пире пулăшнăшăн патшалăха тав. Пур арçын та кил-çурт çавăрма пултараймасть: пĕри – хастар, тепри – кахал. Манăн упăшка та çавнашкалах пулчĕ».



Наталья мăшăрĕ пирки сăмах вакламасть, уйрăлнă вĕсем. Вăл пилĕк ачана пĕччен çитĕнтерессинчен те хăраман. Аслă хĕрĕ Надя, иртнĕ çул Шуршăлти вăтам шкула ылтăн медальпе пĕтернĕскер, халĕ Чăваш патшалăх педагогика университетĕнче вĕренет. Ыттисем пурте – шкулта. Хăй те пĕлÿ çуртĕнче тирпейлÿçĕре вăй хурать. Унсăр пуçне 4 пин тенкĕ ытла ача-пăча пособийĕ илет. Ултă çыннăн вунă пин тенкĕпе паянхи кун мĕнле тăранса пурăнмалла? Ачасене тумлантармалла, газшăн, çутăшăн, шывшăн тÿлемелле. «Компьютер, фотоаппарат туянма кредит илтĕм, – терĕ хĕрарăм шухăшлăн. – Субсиди уйăрнă май çутăшăн, газшăн сахалрах тÿлĕпĕр малашне. Паллах, çемье лавне пĕччен туртма çăмăл мар. Атте чылай пулăшать. Пахча çимĕçпе, сĕт юр-варĕпе вăл тивĕçтерет. Хамăр та пулăшатпăр ăна. Çăвĕлех ун патĕнче, Анаткасра, пурăнатпăр, ĕçлетпĕр».

Наталья каланă тăрăх – ашшĕ Вениамин Давыдов пĕччен пурăнать пулсан та ĕне усрать. Ватлăха пăхмасăр кил-çуртне тирпейлĕ тытать. Çуллахи каникулта ватă çын мăнукĕсемпе савăнать. Çамрăк ăру ăна тунсăхлама памастех.

## «Ыттине хамăрах пурнăçлăпăр»

Малашне Журавлевсем чăх-чĕп, кролик усрас кăмăллă. Халĕ вĕсен пĕр сурăхпа икĕ путек, йытă пур. Хĕрĕ Аня выльăх-чĕрлĕх юратать. Сурăхсене вăл пăхать. 10-мĕш класра вĕренекен Вася та амăшне пулăшма тăрăшать. Иртнĕ çулла вăл районти халăха ĕçпе тивĕçтерекен центр урлă Тутаркасси ялĕнче керамблок тунă çĕрте вăй хунă. Аня та çак майпах ял тăрăхĕнче чечек лартас тĕлĕшпе ĕçленĕ. Кăçал та укçа ĕçлесе илме ĕмĕтленеççĕ вĕсем. Алеша, 7-мĕш класра вĕренекенскер, спортпа туслă. Вăл районта, шкулта иртекен ăмăртусене хутшăнать. Вика 1-мĕш класра ăс пухать. Кĕнеке вулама кăмăллать. Пĕчĕкскер пиччĕшĕсемпе аппăшĕсем пек хастар çитĕнет.



Çуркунне вĕсене çурт çумĕнче çĕр уйăрса парĕç. Ку ыйту вырăнтан тапраннине пĕлтерчĕç ял тăрăхĕнче. Апла пулсан Журавлевсем пахча çимĕçе хăйсемех çитĕнтерĕç. «Пахча çимĕç калчисем лартасси пирки шухăшлатпăр, вăрă туянатпăр, – ĕмĕт-шухăшĕпе паллаштарать Наталья. – Эпĕ чечек кăмăллатăп. Атте патĕнче, ялта, ÿстереттĕм. Вĕсем пахчана илем кÿреççĕ-çке».

Чечек тенĕрен çакна та палăртмалла: пÿлĕмре те тулли вĕсем. Кашни чÿрече анинче – ултшар-çичшер куршак.

Çемьене тăрантарас тĕллевпе хĕле валли варени, салат чылай тума тивет кил хуçи хĕрарăмĕн. Вĕсене хальлĕхе сивĕтмĕшре упраççĕ. Малашне путвалта тытĕç. Вăл самаях пысăк.

«Журавлевсен ачисем лайăх вĕренеççĕ, хастар, амăшне пулăшаççĕ», – лайăх хак пачĕç çемьене ял тăрăхĕнче ĕçлекенсем. Тĕпренчĕкĕсен ÿсĕмĕсемпе савăнса пурăнтăр хĕрарăм. Дневникри «5» паллă та амăшĕн чунне çемçетет тепĕр чух.

«Халĕ аптрамастпăр. Çурт-йĕр пур. Ыттине хамăр тăрăшăпăр, ачасем çитĕнеççĕ», – калаçăва пĕтĕмлетрĕ Наталья.

Патшалăх уйăрнă укça (3 млн тенке яхăн) çилпе вĕçмен. Çак кермента телей туптăр йышлă çемье. Пахча тулли çимĕç ÿстĕр, картиш тулли выльăх пултăр.

**Кăларăма**
**Валентина ПЕТРОВА хатĕрленĕ.**

## Сăра-эрех ăсран кăларать

Элĕк районĕнче пурăнакан 39 çулти арçын ют ачана хĕнеме юрать тенĕ-ши? Ниçта та ĕçлеменскер, сăра-эрехпе туслăскер харкашма юратнă. Арăмне тата унăн хĕрĕсене (10 тата 4 çултискерсене) пĕр айăпсăр кÿрентернĕ. Вĕсен çине алă çĕкленĕ. Амăшĕ çук чухне вуннăри хĕрне темиçе хут та пусĕнчен, çурăмĕнчен пĕр шелсĕр çапнă.

Сăра-эрехпе минренĕ арçын тĕлĕшпе уголовлă ĕç пуçарнă.

## Ачисем те кирлĕ мар

Етĕрне районĕнче пурăнакан 49 çулти хĕрарăм 2013 çулхи кăрлачăн 15-мĕшĕнчен пуçласа раштавăн 2-мĕшĕччен çула çитмен виçĕ ачишĕн алимент тÿлемен. Суд ăна айăплă тесе йышăннă, 4 уйăхлăха условлă майпа ирĕклĕхсĕр хăварнă.

## ЧĂВАШ НАЦИ ТЕЛЕКУРАВĔН ЭРНЕЛĔХ ПРОГРАММИ

**Тунти кун, пуш уйăхĕн 10-мĕшĕ**
9.30 «СЕРДЦЕ НА ДВОИХ» (12+)
12.00»САМЫЙ ЛУЧШИЙ ПАПА». ГОРОДСКОЙ КОНКУРС (6+)
17.00 «ЭХ, ЮРРĂМ, ЯНĂРА!» (12+)
17.30 «СИРЕ САВСА ЮРЛАТĂП». А. КУЗНЕЦОВ ТАТА ЧĂВАШ ЭСТРАДА ЮРĂÇИСЕМ (6+)
20.30 «АКИЛБУПСЕР» (0+)

**Ытлари кун, пуш уйăхĕн 11-мĕшĕ**
6.00 «НА МИР СМОТРИТЕ ДОБРЫМИ ГЛАЗАМИ» (6+)
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
19.00 «ÇĔР ТИВЛЕЧĔ» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
20.00 «КОМФОРТНЫЙ ГОРОД» (12+)
20.30 «ПОШЕПТУШКИ» (0+)
23.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
23.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
23.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
00.00 «КОМФОРТНЫЙ ГОРОД» (12+)

**Юн кун, пуш уйăхĕн 12-мĕшĕ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ЧĂВАШ ХАЛĂХ ЮМАХĔСЕМ» (0+)
19.00 «ÇИТМĔЛ ТЕ ÇИЧЧĔ» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
19.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
20.00 «БИЗНЕС СРЕДА» (12+)
20.30 «ПОШЕПТУШКИ» (0+)
23.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
23.15 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
23.30 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
23.45 «БИЗНЕС СРЕДА» (12+)

**Кĕçнерни кун, пуш уйăхĕн 13-мĕшĕ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ЧĂВАШ ХАЛĂХ ЮМАХĔСЕМ» (0+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
6.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
19.00 «АВАН-И» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
20.00 «ПРАВИТЕЛЬСТВЕННАЯ СВЯЗЬ» (12+)
20.30 «ПОЕТ МЕФОДИЙ ДЕНИСОВ». КО ДНЮ РОЖДЕНИЯ ЗАСЛУЖЕННОГО АРТИСТА РОССИИ, НАРОДНОГО АРТИСТА ЧУВАШИИ МЕФОДИЯ ИВАНОВИЧА ДЕНИСОВА (0+)
23.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
23.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
23.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
00.00 «ЗНАКОМЫЕ ЛИЦА» (12+)

**Эрне кун, пуш уйăхĕн 14-мĕшĕ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ИЛЕМПИ УРОКĔСЕМ» (0+)
19.00 «КИЛ ĂШШИ» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
19.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
20.00 «НАОБУМ» (12+)
23.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
23.15 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
23.30 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
00.00 «НАОБУМ» (12+)

**Шăмат кун, пуш уйăхĕн 15-мĕшĕ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ИЛЕМПИ УРОКĔСЕМ» (0+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
6.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
9.00 «АНАТОЛИЙ КИПЕЧ ПУЛТАРУЛĂХ КАÇĔ» (6+)
10.30 «ЭХ, ЮРРĂМ, ЯНĂРА!» (12+)
11.00 «АКИЛБУПСЕР» (0+)
11.30 «ЖЕМЧУЖИНА ЧУВАШИИ» (6+)
17.00 «БИЗНЕС СРЕДА» (12+)
17.30 «ЗНАКОМЫЕ ЛИЦА» (12+)
18.00 «ПРАВИТЕЛЬСТВЕННАЯ СВЯЗЬ» (12+)
18.30 «АХ, КАКАЯ ЖЕНЩИНА!». ГОРОДСКОЙ КОНКУРС» (12+)

**Вырсарни кун, пуш уйăхĕн 16-мĕшĕ**
9.00 «КАПКĂНРИ КАПКĂН». ЧĂВАШЛА КУÇАРНĂ ФИЛЬМ (12+)
17.00 «КОМФОРТНЫЙ ГОРОД» (12+)
17.30 «КИЛ ĂШШИ» (12+)
18.00 «ЯШ, ЧУХ, ÇАМРĂК ЧУХ» (12+)
18.30 «КРУГЛЫЙ СТОЛ» (12+)
19.00 «ДУХОВНАЯ ЖИЗНЬ» (12+)
19.30 «САРПИГЕ». БАЛЕТ В 2-Х АКТАХ ПО СКАЗКЕ Е. НИКИТИНА (6+)



## УЙĂХ КАЛЕНДАРĔ

| Число, кун | | Пуш, 5 – юн кун | Пуш, 6 – кĕçнерни кун | Пуш, 7 – эрне кун | Пуш, 8 – шăмат кун | Пуш, 9 – вырсарни кун | Пуш, 10 – тунти кун | Пуш, 11 – ытлари кун |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| ХĔВЕЛ | тухать | 7.33 | 7.31 | 7.28 | 7.25 | 7.23 | 7.20 | 7.18 |
| | анать | 18.32 | 18.35 | 18.37 | 18.39 | 18.41 | 18.43 | 18.45 |
| Кун тăршшĕ | | 10.59 | 11.04 | 11.09 | 11.14 | 11.18 | 11.23 | 10.27 |
| УЙĂХ | тăхри | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать |
| | кунĕ (12 сехет тĕлне) | 5-мĕш кун | 6-мĕш кун | 7-мĕш кун | 8-мĕш кун | 9-мĕш кун | 10-мĕш кун | 11-мĕш кун |
| | | Вăкăр паллинче | Вăкăр паллинче | Йĕкĕреш паллинче | Йĕкĕреш паллинче | Йĕкĕреш паллинче | Рак паллинче | Рак паллинче |

## ВУЛАВĂШ

**Ангелина ПАВЛОВСКАЯ**

# Урик аппа

**Калав**

Урик аппа. Ял çинче ман кукамая çапла чĕнеççĕ. Урик аппа вăл пуриншĕн те. Çамрăк чух Урина текенсем те пулнă тет те, халь тин апла чĕнекен никам та юлман. Пурте автан авăтман яла куçса кайса пĕтнĕ. Ĕнтĕ кукаçи вилни те вунă çул çитет.

Кăçал кĕркунне сакăр вуннă тултарчĕ кукамай. Унăн менелникне тăван-пĕтен, ялйыш йышлăн пухăнчĕ, шавласа-кĕрлесе иртрĕ асăннă кун. Ывăлĕ-хĕрĕсем, мăнукĕсем пĕри те килмесĕр юлман. Эпир, вун саккăра çитменнисем, çывăрмалли пўлĕмре хĕвĕшеттĕмĕр. Уяв ячĕпе кукамая саламласа, ырă сунса каланă ăшă сăмахсем, тулли кĕреке, шăкăл-шăкăл калаçу юбиляр сăнне çамрăклатса çутатса ячĕç. Пўрт тулли аса илў кĕпĕрленсе кĕрсе тулчĕ: пулни-иртни, курни-тўсни, телейĕ-савăнăçĕ! Сахал пулнă-и вĕсем 80 çул хушшинче. Хăш кунĕ чăн тўпери çут хĕвел пекех йăлтăр-йăлтăр çутăпа хĕмленсе тепĕр хут çамрăклăха пырса курма, хĕр тантăшсемпе пĕр шухăшсăр кулса-савăнма, тĕпĕртетсе çуйхашма чĕнет пуль, хăшĕ вара шартлама сивĕ пек пĕтĕм чун-чĕрене шăнтса хытарса лартать, вĕри юна шăнтса пăр тăвать. Хăнавĕрле хăшĕ альбом тытнă, сăн ўкерчĕксем пăхать. Эпир те йышлăн диван çине чышăнтăмăр, альбомсем пăхатпăр. Пўртре çап-çутă. Мана темшĕн кукамая паян пĕрремĕш хут куратăп пек туйăнчĕ: самаях кукăрăлнă пилĕк-çурăмĕ, акăш çуначĕ пек шап-шурă çўçĕ, куç тавра çеç мар, пĕтĕм пит-куçне сăрса илнĕ пĕрĕмсем. Альбомри сăн ўкерчĕксем çине пăхатăп та — кукамай пурăнса ирттернĕ кунсене ăнланма тăрăшатăп, анчах вăл кунсем мĕн тĕслĕрех пулнине тавçăрса илейместĕп. Акă вун сакăр çулти пĕр тумлам шывсăр çăтса ямалла яштака пўллĕ, чăмăр кĕлеткеçурăмлă, икĕ хулăн та вăрăм çивĕтлĕ чиперкке тăрать. Кам калатăр ĕнтĕ çав чиперккерен паянхи Урик аппа пулса тăнă тесе. Ку вăл чипер Урик колхоз акатуйĕнче тет. Хаваслă та телейлĕ кунсенчен пĕри ĕнтĕ. Ак тата Уриксем нимĕç çарĕ Мускав патнелле талпăнса килнĕ кунсенче окоп чавакансем хушшинче. Кукамай аллинче йывăр тимĕр лум. Хура кĕрĕк пиншакпа, кăçатăпа. Куç харшисене пас тытса лартнă. Çăвартан палкаса тухакан пăс паян та курăнса тăрать хĕлĕ — пуçне шурă юр çуса шуратнă, сўнсе кĕл пулнă вучах пек, ăшши те, хĕрўлĕхĕ те пĕтсе пырать. Сăмах хыççăн сăмах, аса илў хыççăн аса илў...

— Ачасем, сире тахçанах каламалли сăмах пур манăн. Паян кунччен те чĕлхе çавăрса каламалли майлă самант пулман, — пуçларĕ кукамай сăмахне хăнасем кăшт лăпланнă самантпа усă курса. Пурте пĕр харăсах пуçсене ват çын еннелле пăртăмăр.

темелле. Нумай сăн ўкерчĕк. Ку альбомра вара кайран, çемье çавăрса ача-пăча ўстернĕ хаваслă кунсенче ўкернисем. Аннепе Коля кукка шкул ачи тумĕпе, кĕçĕннисем иккĕшĕ те кукамай çумне тĕршĕннĕ. Кукаçипе кукамай ун чух тимĕре туртса татас вăй питтисем. Ватлăх тени таçти аякри сăртсем хыçнех пытаннă та, чĕввĕн тăрса пăхсан та курăнман. Килĕштерсе те савса пурăннă вĕсем пĕрне-пĕри. «Пирĕн телее курса улăхри ешĕл курăк хĕпĕртесе кулатчĕ. Шухă çил кăкăрта вырнаçаймасăр чун-чĕрене хăпартлантарса тăратчĕ. Каçсерен яшкĕрĕм вăйă каланине илтсен чĕрери юн вĕреме кĕретчĕ», — тет кукамай. Ку альбомĕнче ачисем, мăнукĕсем, кукамайпа кукаçи тĕрлĕ куравра, пухусенче тухса калаçнисем, тĕл пулусем. Хĕрĕх çул фермăра ĕçлесе ирттернĕ вĕсем иккĕшĕ. Ирттернĕ темелле ĕнтĕ. Кукаçи вунă çул каяллах çĕре кĕнĕ, кукамай, типсе хăрнă хурăн майлах, хăйĕн хĕлне çитсе кĕнĕ. Çитнĕ унăн Вĕт-шакăр та диван çине хĕсĕнсе шăпланчĕ.

— Ĕмĕр тăршшĕпе шăтса юхайман çăпан пек чĕрене ыраттарса пурăнать çак хут татăкĕ. — Хыткан аллисемпе саппун кĕсйинчен сарăхса кайнă хута туртса кăларчĕ. — Ку эп айăплă марри çинчен калакан суд йышăнăвĕ. Чи кирлĕ хутсем хушшинче пытарса усрарăм. Паян куна çитсе пĕр çын та тытса вуламан ăна. Вуланă пулсан мана çын вĕлерекен теме пултарĕччĕç. Аçуна та кăтартман. Ачасем çурални çинчен панă хутсем, аçун вăрçăран янă çырăвĕсем, эп ĕçре илнĕ Мухтав паллисем хушшинче пурăнчĕ. Ак паян пĕтĕм тăван умĕнче каласа паратăп та хутне кăмакана пăрахатăп. Тĕрĕссипе каласан, эпĕ пĕр пĕрчĕ те айăплă пулман, çыннине пўрнепе те тĕкĕнмен, çапах çав çылăха каçарттараймастăп. Вилме выртсан та вилеймесĕр асапланмалла пулмасан юрĕччĕ-ха. — Пўртре шăп. Эрех хăвачĕ те таçта кайса кĕчĕ, урăлсах кайрĕç хăнасем. — Эп ку яла качча киличченех пулнă ку ĕç. Пулнă та, ял хыпарĕ хамăр ялах юлнă. Аттепе анне вилнĕ хыççăн ача-пăча вакăрах тесе хамăр яла кайсах та çўремен. Пиччесем иккĕшĕ те Мускавраччĕ, ялта çывăх тăван çукрах. Çулĕ инçе. Тăвата-пилĕк çулта пĕр-икĕ хут йăпăртлăха çеç кайкаланă. Кукаçу илтессе илтнех-ха вăл хыпара, анчах чĕри патне илмен. Манран ыйтса тĕпчемен. Ытла ваклама юратмастчĕ вĕт ман старик. Иртнĕ ырă кунсем хамăр умра тăччăр, усаллисем пирĕн хыçра юлччăр тетчĕ. Пĕлнĕ вăл, паллах. Хамăр ял çыннисем каласа панах ĕнтĕ. Манран пĕрре тесен пĕрре ыйтса чуна ыраттарман. Çав вилнĕ каччă мĕлки ман çумрах çыпăçса çўретчĕ. Кайран, ачасем ўснĕ вăхăтра, маннă пек пулнăччĕ. Ват енне кайрăм та, каллех килсе çулăхрĕ. Ĕнтĕ 62 çул иртнĕ унтанпа, çавах ăшран тухмасть. Çак пуç купташкине пĕр самант та шухăшсăр пурăнмалла туман, тупата.

Пĕрне манатăн, тепри вĕçсе çитет те çавăрттарма тытăнать. Тинĕсре хум хыççăн хум хăваласа чупнă пек. Хура тинĕс хĕррине санаторие иккĕ те кайнă-çке-ха эп, хумсем чупнине сăнама питĕ юрататтăм.

Эпĕ çав çул вун саккăр тултартăм. Нимпе те катăк марччĕ ытти хĕрсенчен: кĕлетке-çурăмпа та, сăн-питпе те. Атте: «Пирĕн Урике чаплă ăста тунă. Карасран шăратса кăларнă пек. Такам килне кĕрсе такама юрамалла. Алли-ури те, кăмăлĕ те ылтăн», — тетчĕ. Ырă çи-пуç туса пама тăрăшатчĕç мана, юсав çўрететчĕç. «Хăюллă, авăрланă пăшал пек пул, çынна куçран хăюллăн пăхса калаçма вĕрен», — тетчĕ. Ну, иртместчĕ ун чух вăхăт, тимĕр шапа та хытăрах чупать пуль. Атте вара: «Ан васка. Кашни чечекĕн хăйĕн çурăлас кунĕ, сехечĕ пур. Çамрăкăн кунĕ те, çулĕ те вăрăм. Питĕ хăвăрт ўссе пысăк пулас килет, анчах çулĕ ўсмест. Ватăлас енне кайсан вара кунĕ-çĕрĕ туртса тăснă пек вăрăм та çулĕ кĕске. Туххăм çул хыççăн çул вĕçсе иртет, ватăлнине те сиссе юлаймастпăр», — тетчĕ. Мĕн тери тĕрĕс ват çын сăмахĕ. Чăнах та çапла. Аран-аран вун саккăра çитрĕм. Улахсене тухма тытăнтăм, алăсем те ĕç патне пыма хăнăхрĕç. Çав çул ялти шкултан вĕренсе тухрăм, Шупашкарти ял хуçалăх институтне кĕрес ĕмĕтпе кайнăччĕ те кĕреймерĕм. Вара Варварипе иксĕмĕр пĕрер çул фермăра пăрусем пăхма шут тытрăмăр. Питĕ килĕшетчĕ мана фермăра. «Пăрусене чуп тăватни çак эс?» — тетчĕ Варвари эпĕ вĕсене ачашланине курсан. Мĕнле юратмăн, куçранах пăхаççĕ те. Ял умĕнче — суд умĕнче тенĕ. Кашни утăм халăх умĕнче çав ĕнтĕ. Хăюллăнах утса çўреттĕмĕр. Ах, тўпене яр уççăн вĕçсе хăпарасчĕ те çав пыл пек пылак кунсене тепре кураясчĕ, çамрăклансах кайăттăм та. Çук çав, тĕлĕк пек çеç, тĕтре витĕр çеç курăнаççĕ. Çамрăклăха каялла таврăнмалла туман.

Хĕл çитрĕ. Эпир Варварипе фермăрах ĕçлеттĕмĕр. Чўк уйăхĕнчех çĕр хытă шăнчĕ çав çул. Çĕнĕ çула кĕтĕмĕр. Кăрлач уйăхĕнче вара тăршшĕпех раштав сиввисем тăчĕç. Нихăçан манас çук: 27—28 градус тăратчĕ, вăтăр та пулкалатчĕ. Аттепе анне кивĕ Çĕнĕ çул тума Çăкалăха куккасем патне кăшарни ĕçкине кайрĕç. Пиччесем иккĕшĕ те Мускавра вĕренеççĕ. Вера йăмăк аннесемпе çакланса кайрĕ. Киле пĕчченех юлтăм. Ара Варвари пур вĕт ман, мĕн шикленмелли.

Хамăр патрах çывăратпăр та ирех фермăна уттаратпăр тесе хĕр тусăма кĕтеттĕм. Пўртри ĕçсене пĕтертĕм, выльăхсене апат парса хупрăм, нуски çыхма лартăм. Çичĕ сехет те çитрĕ, Варвари çук та çук. Урама та тухса пăхрăм. Аванах шатăртаттарать вара кĕçĕр. Тўпере çăлтăрсем хĕмленеççĕ. Кашни çăлтăрĕ — пĕр вучах.

*(Вĕçĕ пулать.)*

## Нарăсăн 1-мĕшĕнчен – малтанхи хакпа

***Хисеплĕ вулакансем! «Хыпар» Издательство çурчĕн кăларăмĕсене 2014 çулăн II çурринчен илсе тăмашкăн нарăсăн 1-мĕшĕнчен тытăнса пуш уйăхĕн 31-мĕшĕччен малтанхи хаксемпе çырăнтараççĕ***

| КĂЛАРĂМСЕМ | ИНДЕКС | ÇЫРĂНТАРУ ХАКĔСЕМ | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| | | Почта уйрăмĕсенче | «Чăваш пичет» киоскĕсенче | «Советская Чувашия» киоскĕсенче | Редакцире |
| Хыпар | 54800 | 460-86 | 279 | 279 | 144 |
| Хыпар-шăмат кун | 78353 | 218-22 | 141 | 141 | 90 |
| Çамрăксен хаçачĕ | 54804 | 272-22 | 231 | 231 | 144 |
| Чăваш хĕрарăмĕ | 11515 | 243-18 | 213 | 213 | 141 |
| Сывлăх | 11524 | 130-98 | 111 | 111 | 81 |
| Кил-çурт, хушма хуçалăх | 54806 | 122-70 | 111 | 111 | 81 |
| Хресчен сасси | 54838 | 226-62 | 162 | 162 | 114 |
| Хресчен сасси-Кил | 43887 | 102-90 | 84 | 84 | 61-20 |
| Тăван Атăл | 11529 | 251-76 | 216 | 216 | 168 |
| Капкăн | 24608 | 122-10 | 105 | 105 | 87 |
| ЛИК (Литература. Искусство. Культура) | 83429 | 127-92 | 120 | 120 | 100 |
| Вести Чувашии | 54807 | 220-08 | 186 | 186 | 144 |
| Собрание законодательства Чувашской Республики | 54847 | 695-88 | 660 | 660 | 570 |
| Тантăш | 54802 | 192-18 | 132 | 132 | 90 |
| Самант | 73208 | 155-64 | 156 | 156 | 120 |
| Тетте | 73771 | 119-58 | 111 | 111 | 90 |


## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРЎСЕМ

### ПРОДАЮ

**2. АКЦИЯ! Блоки керамзитобетонные** 20х20х40 – **33** руб., 12х20х40 – 29 руб., 10х20х40 – 25 руб. Высокое кач-во. Доставка. Т. 89196543499.

**3. АКЦИЯ! Кольца колодезные** диам. 0,7 м, 1 м, 1,5 м. Д-ка манипулятором. Бурение. Т. 89196543499.

**33. Гравмассу,** гравий, **песок,** щебень, **керамзит.** Доставка. Т. 89053465671.

**45. Песок, гравмассу, щебень.** Д-ка. Т. 89196543499.



«ХРЕСЧЕН САССИ»
Обществăпа политика хаçачĕ
Индекс 54838
Учредителĕ – ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви, «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ

ДИРЕКТОР-ТĔП РЕДАКТОР – А.П. ЛЕОНТЬЕВ
Редактор – Е.Н. НИКОЛАЕВА (тел. 56-34-63)
Редакци адресĕ: Шупашкар, И. Яковлев пр., 13.
Телефонсем: директор-тĕп редактор – 56-00-67, тĕп редактор çумĕ – 62-04-54, пайсем – 56-34-63, 62-50-06, 28-86-68, реклама пайĕ тел./факс – 28-83-70. Факс (8352) 62-50-06

www.hypar.ru,
e-mail: atal-volga@mail.ru

Хаçата 2013 çулхи раштав уйăхĕн 10-мĕшĕнче Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсемпе массăллă коммуникацисен сферинчи саккунсене пăхăннине сăнаса тăракан службин Чăваш Республикинчи управленийĕ ПИ ТУ 21-00305 № регистрациленĕ.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă хатĕр оригинал-макетран «Чăваш ЕН» ИПК» АОУ типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Шупашкар, И. Яковлев пр-чĕ, 13.

Графикпа 17 сехетре алă пусмалла.
17 сехетре алă пуснă.
Заказ 780 Тираж 4403

* Рекламăпа пĕлтерўсем. Реклама тексчĕсемпе пĕлтерўсемшĕн вĕсене паракансем яваплă.